Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

*49 (7580) №* ✻ *Шăмат кун, 2008 çулхи июлĕн (утă) 5-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

Симĕс ĕç çи

## «Геройра» выльăх апатне çĕнĕлле хатĕрлеççĕ



Симĕс ĕç çи пуçланчĕ. Ял ĕçченĕн паянхи вăр-варлăхĕнчен килет те ĕнтĕ шăпах обществăлла выльăх-чĕрлĕх хĕле епле ирттересси, çак тапхăрта продуктивлăха чакарса ярас марри. Тепĕр чухне хатĕрленĕ выльăх апачĕ те ăна хатĕрлессин технологине пăхăнманнине пула йĕркеллĕ упранмасть. Пахалăхсăр апатран ăçтан-ха сăвăм ӳстĕр, выльăхсем ытларах ӳт хушчăр? Çакă йăлтах паян хуçалăх ертӳçисемпе специалистсен ыранхи куна чылай маларах курма пĕлмелли çинчен калать. Тĕслĕхрен, выльăх апатне хатĕрленĕ чух консервантпа усă курсан, выльăх апачĕ те пахалăхлă пулать. Çав органикăлла кислотасем выльăх апатĕнчи усăллă бактерисене аталанма, сиенлисене пĕтерме пулăшаççĕ. Силос е сенаж, утă лайăх упранать, хĕрсе каймасть, апла пулсан – пăсăлмасть. Пахалăхлă апат продуктивлăха ӳстерессин тĕп çăл куçĕ пулнине вара кашниех пĕлет. Анчах ку таранччен «Герой» хуçалăхсăр пуçне нихăш хуçалăхра та çав органикăлла кислотасем пур консервантсемпе усă курса хатĕрлемен-ха выльăх апатне.

«Геройра» вара çакăн уссине пĕлтĕрех туйса илчĕç. Районта пурăнакансем астăваççĕ пулĕ-ха, иртнĕ хĕлле асăннă хуçалăхра сăвăм та чи пысăкки, выльăхсен ӳт хушаслăхĕ те лайăх пулчĕ. Çакăн вăрттăнлăхĕ шăпах хуçалăх ертӳçин Р.Н. Тимофеевăн сăмахĕсенче курăнать.

– Иртнĕ çул кальци пропионатне 200 килограмм туянтăмăр. Пурĕ унпа усă курса 1 пин тонна выльăх апачĕ хатĕрлерĕмĕр. Выльăхсем юратсах çирĕç органикăлла кислотасемпе хутăштарса тунă апата, – тет вăл та, бухгалтери ĕçченĕсем те.

Ростислав Николаевич каланă тăрăх асăннă препарата кăçал та 3500 тонна выльăх апатне хатĕрлемелĕх кӳрсе килнĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа «Геройра» пултăмăр. Çанталăк нӳрĕрех пулнине пăхмасăрах кунта «симĕс ĕç çи» вĕресе кăна тăрать.

Выранти пек каласан, Тутар уйĕнче А.Е. Ефимовпа В.А. Карпов механизаторсен агрегачĕсем клевера çулса вĕтетсе пыраççĕ. 40 çул хуçалăхра тимленĕскерсем техникăна пĕр тикĕс ĕçлеттереççĕ. А.М. Фадеев, А.И. Васильев, Д.М.Трофимов, Н.В. Иванов водительсем симĕс массăна силос туса упрамалли вырăна турттараççĕ.

Силоса консервантпа усă курса хатĕрлесе шăтăка хунă çĕрте те вăхăта пĕр минут та сая ямаççĕ. Уйран илсе килнĕ массăна Н.А. Евдокимовпа В.А. Иванов механизаторсем тракторсемпе пусăрантараççĕ.

– 570 тонна силос кĕрекен шăтăка хупрăмăр ĕнтĕ. Халĕ тепри тулать, кунта 300 тонна кĕрет, – паллаштарать хуçалăхри лару-тăрупа ертӳçĕ.

– Пĕрремĕш шăтăкне çĕрĕпех таптарăмăр-ха, – ĕç результачĕпе кăмăллă З.М. Романова бригадир та. Алă вĕççĕн тумалли ĕçсене вара кунта Ивановсем пурнăçлаççĕ: Анфиса Михайловнапа Вячеслав Николаевич, Вера Иосифовнапа Алина Филипповна.

– Хĕлле скотникра, халĕ кунта ĕçлетĕп, – хăй ĕçĕпе кăмăллине пытармасть В.И. Иванова. – Икĕ алла – пĕр ĕç.

Ĕçлекен, ӳркенмен çын ял хуçалăх предприятийĕнчех япăх мар ĕçлесе илнине «Герой» хуçалăхах çирĕплетсе парать.

– Çур акине кунта 15 кунта ирттерчĕç. Пĕр кун сиктермесĕр ĕçленисем 25 пин тенкĕ ĕçлесе илме пултарчĕç. 5-6 кун ĕçленисем те 10 пин тенке яхăн илчĕç, - тет Ростислав Николаевич. – Выльăх апачĕ хатĕрленĕ çĕрте те ĕç укçи япăх мар пулать. Сменăри нормăшăн механизаторсене 600 – 700 тенкĕ тӳлеççĕ, водительсене – 400 тенкĕ. Апла пулсан 15-20 пин тенкĕ ĕçлесе илме пулать.

Выльăх апатне тунă çĕре хутшăнакансене хуçалăхра вĕри апат уя тухса çитереççĕ. А.Н. Иванова повар кăмăллă каласать çĕр ĕçченĕсемпе. М.И. Михайлова бригадир ларутăрăва куçран вĕçертмест.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе те мĕнпур мерăсене йышăннă кунта.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕкре: район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов апат вăхăтĕнче механизаторсемпе канашлать.**

Республика кунне уявланă май

## Пулăшнăшăн – пысăк тав

Республика Президенчĕ Н.В. Федоров июнĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ларăвне ирттернĕ май Республика кунне уявланин малтанхи итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Вăл палăртнă тăрăх, уяв çӳллĕ шайра иртнĕ. Республика кунĕпе çыхăннă мероприятисене çĕртмен 18–24-мĕшĕсенче Раççей регионĕсен, ытти çĕршывсен тĕрлĕ предприятийĕсемпе организацийĕсен представителĕсем сахал мар хутшăннă, республикăна аталантарассипе çыхăннă тĕрлĕ енлĕ килĕшӳсем чылай тунă.

Республика кунне районта ирттернĕ май район пурнăçĕнче те палăрамлă улшăнусем пулса иртрĕç. Ялсен урамĕсем тирпейленчĕç, хитреленчĕç, чечекленчĕç, сахал мар çĕнĕ çулсем хута кайрĕç, Шетмĕпуçĕнче пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ, Кашмашра республикипе пĕрремĕш база учрежденийĕ – Культура çурчĕ, «Сеспель» предприятире çĕнĕ производство комплексĕ, район центрĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ ĕçлеме тытăнчĕç.

Кирек епле пысăк мероприятие ирттересси те укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавна май Республика кунне ирттерме пулăшнисене пурне те пысăк тав сăмахĕ калас килет. Пĕтĕмпе 60 ытла предприятипе организаци, уйрăм предприниматель Республика кунне хатĕрленсе ирттерме пурĕ 700 пин тенке яхăн суммăлăх пулăшрĕç – укçан тата тĕрлĕ ĕçсем туса. Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕ 50 пин тенкĕ укçа парса пулăшрĕ. Çавăн пекех укçан тата тĕрлĕ ĕçсем туса пулăшнисене пурне те ятранах асăнас килет. Муркаш райповĕ, «Сеспель» акционерсен хупă обществи, «Муркашри кирпĕч завочĕ»» акционерсен уçă обществи, «Чувашское» перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕ кашниех 80 –40 пин тенкĕ уйăрчĕç, «РГС-Поволжье» акционерсен уçă обществин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ, «Муркашри сĕт завочĕ» акционерсен уçă обществи, Мăн Сĕнтĕр райповĕ, «Заря» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхĕ, Н.П. Павлов, Э.И. Баранова, А.И. Быков, А.С. Портнов уйрăм предпринимательсем, «Визит» суту-илӳ çурчĕ, Мичурин яч. хис. агрофирма, «БТИ» муниципаллă унитарлă предприяти, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ, «Кавказ», «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, В.И. Пушкинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ, «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăх, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ, «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăх кашниех 30–10 пин тенкĕлĕх укçан е ĕçпе пулăшрĕç, «Чувашия-Поддержка» страхлакан компани» акционерсен уçă обществи, «Россельхозбанк» акционерсен уçă обществин Муркашри хушма офисĕ, М.А. Тихонов, С.Н. Корольков уйрăм предпринимательсем, Е.Андреев яч. хис., Ленин яч. хис., «Восток», Чапаев яч. хис., К.Иванов яч. хис. хуçалăхсем, «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» МУП, «Ветеринари медицини», «Содружество», «Суту-илӳ центрĕ», «Моргауши – Хлеб», «Вита», «Универмаг», «Энергосервис» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем кашниех 8-5 пин тенкĕ уйăрнă. Çавăн пекех Н.А. Михайлова, В.Г. Васильев, В.К. Васильев, С.П. Парандеев, Н.С. Тихонова, П.Г. Осипов уйрăм предпринимательсем, «Кадикасинский» СПОК, «Биомед», «ДаАн», «ВТМ», «Лотос» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, В.Т. Ямангеевăн, А.Г. Сорокинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, «Кристалл Плюс» СПОССК , «Виват», «ИТ-Технологии» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, Н.А. Васильев, Н.К. Иванова, А.А. Петров, И.П. Никифорова уйрăм предпринимательсем, «Татьяна», «Элтеп» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, «Клим» тата «За единство» СПСКсем, Р.Ю. Васильева уйрăм предприниматель май килнĕ таран пулăшу пачĕç.

Кĕскен каласан, предприятисемпе организацисен ертӳçисене, вĕсенче вăй хуракансене укçа-тенкĕпе кăна мар, хăйсен ĕçĕпе пулăшу панăшăн пысăк тав. Сирĕнте малашне те ыр кăмăллăх иксĕлмессе шанас килет.

**Р. АНАНЬЕВА,**
**район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ.**

### Июлĕн 5-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ПАЙЩИКСЕМ, ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИЙĔН ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**Сире Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

«Пĕрлĕхре – вăй» – шăпах çак сăмахсем кооперацин пысăк миссине уйрăмах лайăх çутатаççĕ: ĕç-хĕлре пĕр-пĕрне пулăшса пырса кулленхи ыйтусене пĕрле татса парассине. Историн вăрăм тапхăрĕнче кооператив юхăмĕ хăй кирек хăçан та актуаллă тата эффективлă пулнине лайăх кăтартса пачĕ, обществăлла аталанăвăн хăватлă вăйĕ пулса тăчĕ.

Пĕр тĕллев патне ăнтăлнă чухне пĕр-пĕрне пулăшмаллин принципĕ республика потребительсен кооперацийĕн ырă традицийĕсене сыхласа хăварма тата çĕнĕ экономика условийĕсенче çитĕнӳсем тума май пачĕ. Чăвашпотребсоюз чăннипех те Раççейре лидер пулса тăрать, яла аталантарассине тата çынсен пурнăç пахалăхне лайăхлатассине палăрăмлă тӳпе хывать. Кооператив организацийĕсен ĕçĕ тĕрлĕ енлĕ: ку вăл ял хуçалăх продукцине туянасси тата ăна хатĕрлесси те, суту-илӳпе обществăлла апатлану та, йăла услугисем парасси тата ытти палăрăмлă енсем те. Социаллă ответлăх ĕçĕ-хĕлĕн тĕслĕхĕ вара – çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелени, ветерансене, инвалидсене, нумай ачаллă çемьесене пулăшни.

Вăхăт çĕнĕ задачăсем кăларса тăратать. Паянхи кун, патшалăх тивĕçлĕ пулăшăвĕпе усă курса, республикăри ялсенче пурăнакансен кооперативсене активлăрах пĕрлешмелле. Çакă вăл ял çыннисене нумай ыйтусене татса пама майсем туса парĕ – хальхи вăхăтри предприятисем уçнинчен тытăнса инфраструктурăна аталантарасси таранах.

Кооператорсен энергийĕ тата предпринимателле пуçарулăхĕ, профессионализмĕ тата опычĕ малашне те çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатса пыма тата Чăваш Республикине малалла аталантарма пулăшса пырасса шанса тăратăп. Сире ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем, çирĕп сывлăх, телей тата ăнăçу сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ КООПЕРАТОРСЕМ, ПАЙЩИКСЕМ ТАТА СУТУ-ИЛӲ ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**Сире хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

Сирĕн ĕçĕр халăхăн пурнăçĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Эсир тавар туянакансен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшатăр, хăвăрăн ĕçĕрте яланах çĕннине шыратăр. Çавăнпах ĕнтĕ эсир паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те çулсерен ӳссех пырать. Суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттернипе пĕрлех эсир халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн тимлетĕр. Ял çыннисенчен ял хуçалăх продукцине, эмел курăкне пуçтарса вĕсен тупăшне ӳстерме пулăшатăр. Сирĕн пархатарлă ĕçĕр районăн социаллă-экономика аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнать. Республикăра та, Раççей шайĕнче те пирĕн районти кооператорсем малти ретре. Çакă хăех эсир хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине кăтартса парать. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те çĕнсе илнĕ чикĕсенчен иртсе, умри тĕллевсене çирĕппĕн пурнăçласса та, халăх пурнăçне тулăхрах та шанăçлăрах тăвассишĕн тăрăшасса та шанас килет. Çăмăл мар ĕçĕрте ăнăçу юнашарах пултăр.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, çемьере килĕшӳпе тату пурнăç, юрату сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

**МУРКАШ РАЙПОВĔН ХИСЕПЛĔ ПАЙЩИКĔСЕМ, ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИЙĔН ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**Сире Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп!**

Кашниех ăнланатпăр, потребительсен кооперацийĕ ялăн малалла ăнăçлă аталанса пымалли тĕп инструменчĕ пулса тăрать. Пирĕн ĕç «Агропромышленность комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проектне пурнăça кĕртсе пынă çĕрте ял хуçалăх производствин эффективлăхне ӳстерме ытларах çул-йĕр уçни паян районта пурăнакан кашни çыншăнах курăмлă. Эпир тĕрлĕ енлĕ аталанатпăр: таварсене курттăммăн тата ваккăн сутни, обществăлла апатланура çĕнĕлĕхсене алла илсе пыни, производство ĕçĕнче çĕнĕ технологисене çул пани, транспортпа тивĕçтерессi тата пысăк квалификациллĕ специалистсем хатĕрлесси.

Хамăр ĕçĕмĕре аталантарнăçем эпир çĕнĕ предприятисем йĕркелесе производствăна ӳстерессi, ял çыннисем валли çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тăвасси çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Çакă йăлтах ялсен аталанăвĕпе, ял çыннисен пурнăç условийĕсем ырă енне улшăннипе çыхăннă. Çапла майпа Муркаш ялĕсене çĕнелсе аталанма ытларах майсем туса паратпăр.

Муркаш райповĕ юлашки çулсенче районта та, республикăра та, унăн тулашĕнче те курăмлă вырăн çĕнсе илчĕ. Унăн никĕсĕнче – сирĕнпе пирĕн пĕрлехи ĕç. Çавăнпа та Тăван Ене аталантарассишĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн пурсăра та тав тăватăп. Ӳсĕмсен çĕнĕ картлашкисене çĕнме пурсăра та çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳ, тапса тăракан оптимизм, тату пурнăç, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатăп!

**Б. АНДРЕЕВ, Муркаш райпо Канашĕн председателĕ.**

Юбилей

### *Саламлатпăр*

Чуманкасси чл тăрăхне кĕрекен Отаркка ялĕнче пурăнакан **Валентина Александровнапа Вячеслав Серафимович ВАСИЛЬЕВСЕНЕ** кĕмĕл туй ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Сире çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Пирĕншĕн яланах эсир ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пулăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, чи çывăх тăванĕсем, Германовсем.**